28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 АВГУСТ 17 ЭРНЕКУН 158(6909) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ВКП(б) Обкомĕнче

Чăваш республикинчи колхозсемпе совхозсенче тырпул пухса кĕртнĕ тата государствăна тырă панă чухне тырпула тăккаланине хирĕç кĕрешмелли мероприятисем çинчен

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакна палăртнă: нумай колхозсемпе совхозсенче тырă вырса пухас ĕçе япăх йĕркелениве пула, уборкăн малтанхи кунĕсенчех тырпула нумай тăккаласа пĕтереççĕ, çав вăхăтрах вырăнти партипе совет тата çĕрĕç органĕсем çак ĕç çине сӳрĕк пăхаççĕ, тырпула тăккаланине хирĕç тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ, тырпула тăккалани государствăна, колхозсемпе колхозниксене сиен кӳнине, çĕршывăн апат-çимĕç ресурсĕсене чакарнине шута илмеççĕ.

ВКП(б) Обкомĕ çапла шутлать: тырпула тăккалани, пуринчен малтан, тырă вырма вăхăтра тытăнманнинчен тата çав ĕçе вăраха тăсса пынинчен килет. Тырă вырас ĕç вăрахăн пынине пула, тырпул ытлашши пулса çитсе ларнă çĕртех тăкăнма тытăнать. Тырпул пухса кĕртес ĕçе вăраха янă пирки пысăк тăкаксем пулас хăрушлăх уйрăмах Кувакино, Йĕпреç, Улатăр, Первомайски, Ишлей, Шупашкар районĕсенчи колхозсем умне çивĕччĕн тухса тăрать. Çав районсенче августăн 14-мĕшĕ тĕлне тĕштырă культурисене пурĕ те 9,2 процентран пуçласа 16 процента çитиччен кăна пухса кĕртнĕ. Çав районсенчи колхозсенче тырă вырса пухас ĕç кая юлса пыни, пуринчен малтан, тырă вырмалли машинăсене хакламаннинчен, нумай комбайнсене ĕçе яманнинчен, лашапа тырă выракан машинăсемпе çителĕксĕр усă курнинчен килет. Çав районсенчи колхозсенче ĕçе юрăхлă мĕнпур çынсене ĕçе явăçтарман, ĕç кунĕпе çителĕксĕр усă кураççĕ. Нумай колхозсенче кăшт çумăр çусанах ĕçлеме чарăнаççĕ те пĕтĕм куна вара ахалех ирттереççĕ.

Нумай колхозсемпе совхозсенче тырă вырса пухас ĕçе питĕ тирпейсĕр туса пынă пирки те тырпула нумай тăккалаççĕ. Комбайнсене тĕрĕс йĕркелесе лартманнине пула тата вĕсемпе тиртерсĕр ĕçленине пула, тĕштырă улăмпа нумай каять. Тырра машинăсемпе тата çавасемпе сулнă чухне уйхирте сулмасăр е пучах пуçтармасăр нумай хăвараççĕ. Тăвай районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозра кашни гектар пуçне 2,6 центнер таран тырă тăккаласа хăварнă. Вăрмар районĕнчи «Новая жизнь», «Большевик» тата ытти районсенчи хăшпĕр колхозсенче те çавна курма пулать. Сулнă хыççăн пучах нумай тăккаланса юлать пулин те, чылай колхозсенче пучаха кĕреплепе е алăпа пухассине организацилемен, хăшпĕр колхозсенче вара вырнă çĕрте пучах пухаччен выльăхсене е чăх-чĕпсене кĕртсе яраççĕ. Вырса пухнă çĕр лаптăкĕсене колхоз председателĕсем тата бригадирсем куллен йышăнса тăмаççĕ.

Тырра машинăсемпе вырнă чухне нумай колхозсенче кĕлте çыхса ĕлкĕрсе пыраймаççĕ, час-часах вырнă е сулнă тырра тепĕр кунччен çыхмасăр пăрахса хăвараççĕ, çыхман тырă вара йĕпе-сапаллă çанталăка пула пăсăлса пĕтет.

ВКП(б) Обкомĕ чылай районсенче кĕлте турттарса капана хывас тата авăн çапас ĕççем пысăк хăрушлăх умне тухса тăнине палăртать, çавна пула татах тырпул нумай пĕтме пултарать. Халĕ чылай колхозсем авăн çапма тата кĕлте турттарса капана хывма пачах та тытăнманха.

Тырпула уйхирти усă итемсем çинче, вăтĕрлев пунктсене турттарнă чухне тата кĕлетсемпе амбарсенче нумай тăккаласа пĕтереççĕ. Итем çинчи тырпула шута илес тата хураллаcа тăрас ĕçе япăх йĕркеленине пула, тырпула пăсса кăна мар, салатса, вăрласа та чылай пĕтереççĕ.

Кăçалхи çул, çĕршыв валли апат-çимĕç парса тăрас ĕç хуçалăхпа политика çĕлĕмĕнчи чи пысăк задачăсенчен пĕри пулса тăнă чухне, тырă вырас, авăн çапас, кĕлте турттарса капана хывас ĕççене тăсса пынине, çавăн пекех тата тырăнти партипе совет, çĕрĕç органĕсем, колхозсемпе МТС-сен тата совхозсен уйрăм руководителĕсем тырă вырса пухас ĕç çине ответсăррăн пăхнине пула тата тырпула шута илес, хураллас ĕçе тĕрĕс мар йĕркеленине пула тырпул нумай тăккаланса пĕтнине ВКП(б) Обкомĕ тӳсме çук тесе шутлать.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

1. ВКП(б) райкомĕсене, райисполкомсене, çĕрĕç органĕсен руководителĕсене тырпула вырнă тата çапнă чухне, кĕлтесене усранă тата турттарнă чухне тăккаланине пĕтерес тĕлĕшпе, тырпула вăрланине е салатнине чарса лартас тĕлĕшпе халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушнă.

Вырăнти партипе совет тата комсомол организацийĕсен чи кирлĕ тивĕçĕ—тырпула вăхăтра пухса кĕртесси, тырра вырса çапнă чухне тата турттарнă чухне тăккаланине пĕтересси. Тырра вăрланине е салатнине хирĕç—çĕршывăн апат-çимĕç ресурсĕсене чакаракан, государствăна, колхозсемпе колхозниксене пысăк сиен кӳрекен çав киревсĕр ĕçе хирĕç татăклăн кĕрешесси пулса тăрать.

2. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсене тырпул пухса кĕртес ĕçе, уйрăмах час тăкăнма пултаракан культурăсемпе сортсене пухса кĕртес ĕçе хăвăртлатма хушнă; колхозсемпе МТС-сенчи тата совхозсенчи мĕнпур вăйсемпе майсене тырпул пухса кĕртес, кĕлте турттарса капана хывас тата авăн çапас ĕççене вăйлатнă çĕре, государствăна тырă памалли плана хăвăртрах тултарнă çĕре мобилизацилеме хушнă.

3. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсене мĕнпур комбайнсене, тырă вырмалли çăмăл машинăсене халех тата пĕтĕмĕшпех ĕçе ярас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма, алăпа тырă вырассине анлăн организацилеме хушнă. Комбайнсене тĕрĕс йĕркелесе ĕçе ямалла; тырпула сӳлтен выртарса уйхире пучах тăккаласа хăварма, тĕплĕн çапмасăр хăварма, çавăн пекех тата тĕштырра улăмпа арпа ăшне хăварма памалла мар. Тырă вырмалли çăмăл машинăсене тĕрĕс мар йĕркеленине тата машинăсем япăх ĕçленине пула тырпул тăккаланассине хирĕç мерăсем йышăнмалла. МТС-семпе совхоз директорĕсен, колхоз правленийĕсен çамрăк комбайнерсене тата тырă вырмалли çăмăл машинăсемпе ĕçлеме опыт çителĕксĕр колхозниксене практикăллă пулăшу памалла. Мĕнпур комбайнсемпе тырă вырмалли çăмăл машинăсем çумне зерноуловительсем тата выртнă тырра вырмалли хатĕрсем туса лартмалла.

Сулнă тырра çийĕнчех çыхасси çине, кĕлтесене типĕтнĕ хыççăнах çĕмеле хывасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Кункаçиччен сулнă тырра çыхмасăр е çĕмеле хывмасăр тепĕр куна хăварма юрамасть. Çĕмелти кĕлтесене тĕплĕн сăнаса тăрассине тата çумăрпа йĕпеннĕ пулсан çĕмелсене тепĕр хут салатса типĕтессине тĕплĕн организацилемелле. Типнĕ тырпула çийĕнчех тата пĕтĕмпех турттарса капана хывас пулать.

Тырă вырса илнĕ мĕнпур уйхирте пучах пухассине организацилемелле. Çав ĕçе колхозсемпе совхозсенчи шкул ачисене тата çамрăксене явăçтармалла. Колхоз председателĕсемпе бригадирсене пучах пухман участоксене йышăнма чарас.

4. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсене авăн çапмалли пилĕккунлăх заданисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пымалла тума хушнă. Çав шутпа МТС-семпе колхозсенчи мĕнпур молотилкăсемпе туллин усă курса ĕçлемелле, авăна тĕплĕн çапасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, тĕштырра улăмпа арпана кайма памалла мар.

Колхозсемпе совхозсенчи сушилкăсемпе лупасайĕсене, витĕнĕ итемсене, авăнсемпе амбарсене йĕркене кĕртес тата вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Çак майпа усă курса вара авăна кирек мĕнле çанталăкра та пĕр чарăнмасăр çапмалла, нӳрĕ тĕштырра вăхăтра типĕтсе, государствăна пама тата колхозра сыхласа усрама хатĕрлесе çитермелле.

Чылай районсенче витĕнĕ итемсем, лупасайсем, авăнсем, сушилкăсем тăвас, киввисене юсас тĕлĕшпе халиччен те мерăсем йышăнманнине тӳсме çук. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен витĕнĕ итемсемпе лупасайсем, авăнсемпе сушилкăсем тумалли тата юсамалли плана пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртмелле тăвас пулать.

5. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен тырпула, уйрăмах итемсемпе уйхирти тырпула, çирĕп шута илессине тата хураллассине организацилес ĕçре колхозсемпе совхозсене ĕçлĕ пулăшу памалла. Çак ĕçсене туса ирттернĕ чухне тырпула обязательнăй йĕркепе висесси çине тата тырра мĕнле сыхласа усранине лайăх контроллесе тăрасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

6. Вырса пухнă участоксене колхоз председателĕсем уйхир бригадисен бригадирĕсенчен, совхоз директорĕсем вара отделени управляющийĕсенчен актсем çырса йышăнмалла. Çав актсенче ĕç пахалăхĕ мĕнлине кăтартса памалла тата тырă вырса пухас ĕçре палăрнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çийĕнчех мерăсем йышăнмалла.

7. Парти райкомĕсен секретарĕсемпе райисполком председателĕсем çине вырса пухнă уйхирсене тĕрĕслес, капан тăвас тата авăн çапас ĕççен пахалăхне тĕрĕслес, çавăн пекех колхозсемпе совхозсенче тырпула мĕнле сыхласа усранине тĕрĕслес ответлăха хурас. Палăрнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе вырăнтах тата çийĕнчех мерăсем йышăнмалла тăвас.

Государствăна пахчаçимĕç парассĕ

Шупашкар районĕнчи Тулик-Хураски ял Советне кĕрекен «Кукшум» колхоз председателĕ Е. Александров юлташ) государствăна пахчаçимĕç пама тытăнчĕ. Колхоз кишĕр тата столовăй кăшманĕ государствăна парса татрĕ.

Г. ПЕТРОВ.

Хĕрлĕ Çарăн Генеральнăй Штабĕ Япони парăнни çинчен ăнлантарса пани

Япони парăнни пирки панă ыйтусем çине Хĕрлĕ Çар Генеральнăй Штабĕн начальникĕ арми генералĕ Антонов ÇАПЛА АНЛАНТАРСА ПАРАТЬ:

1. Япони императорĕ августăн 14-мĕшĕнче Япони парăнасси çинчен пĕлтерни Япони пĕр сăмахсăр парăнасси çинчен тунă пĕтĕмĕшле деклараци кăна пулса тăрать.

Японин хĕçпăшаллă вăйĕсене вăрçма чарăнмашкăн хушса приказ паман-ха. Японин хĕçпăшаллă вăйĕсем малтанхи пекех хирĕç тăрса çапăçаççĕ.

Çапла ĕнтĕ, Японин хĕçпăшаллă вăйĕсем, тĕрĕссипе илсен, парăнман-ха.

2. Япони императорĕ хăйĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене çапăçма чарăнса хĕçпăшала пăрахма приказ панă хыççăн çав приказа чăннипех пурнăçа кĕртме тытăнсан тин Японин хĕçпăшаллă вăйĕсем парăннă тесе шутлама юрать.

3. Малта калани шута илсе, Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем Инçетри Хĕвелтухăçĕнче Японие хирĕç çаплах наступлени туса пырĕç.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 15-мĕшĕнче Инçетри Хĕвелтухăçĕнче совет çарĕсем çаплах малалла наступлени туса пынă, японецсем малтанхи пекех хытă хирĕç тăнă.

ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 1-МĔШ ФРОНТ çарĕсем, тăшман хирĕç тăнине сĕнтере-сĕнтере, сăртлă-вăрманлă йывăр вырăнта çаплах малалла наступлени туса пынă, МУДАНЬЦЗЯН хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре темиçе ял туртса илнĕ.

ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 2-МĔШ ФРОНТ çарĕсем СУНГАРИ шывĕн икĕ хĕррипе те наступлени туса пынă. Амур шывĕн флотилийĕпе килĕшсе кĕрешсе, ХАОЛИЧЖЭНЬ, ЛЯНЦЗЯНКОУ (Цзямусы хулинчен 5 километр çурçĕртерехре), СИНЬЧЖУНЖЭНЬ тата БАОЦИН хулисене çапăçса туртса илнĕ.

БАЙКАЛ ЛЕШ ЕНЧИ ФРОНТ çарĕсем ХУАДЭ, КАНБАО, ЧЖАНБЭЙ тата ДОЛОННОР хулисене çапăçса туртса илнĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем ПЫСĂК ХИНГАН ту хырçинчен хĕвелтухăçнелле наступлени туса пынă, 20—30 километр малалла кайнă.

Пирĕн авиаци тăшманăн çапăçу хирĕç енчи çарĕсене тата Маньчжурири чугун çул узелĕсене пыра-пыра çапнă.

АВГУСТĂН 16-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 16-мĕш кунĕ Инçетри Хĕвел тухăçĕнче Япони çарĕсем Совет çарĕсен позицийĕсене хирĕç контрнаступлени тунипе иртнĕ.

ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 1-МĔШ ФРОНТ çарĕсем, японецсен атакисене сире-сире ярса, ВАНЦИН хулине туртса илнĕ.

Кун каçипех японецсем СЕЙСИН хулине йышăнса тăракан пирĕн çарсене хирĕç ăнăçсăр контратакăсем тунă.

ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 2-МĔШ ФРОНТ çарĕсем, Амур шывĕ çинчи флотилипе килĕштерсе çапăçса, тăшманăн контратакисене сирсе янă та ЦЗЯМУСЫ хулине тытса илнĕ.

БАЙКАЛ ЛЕШ ЕНЧИ ФРОНТĂН çарĕсем чылай участоксенче японецсен вăйлă контратакисене сире-сире янă тата, вăйлă çапăçнă хыççăн, ТАОАНЬ хулипе пысăк чугун çул узелне туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

СОВИНФОРМБЮРО.

Хĕрлĕ Çарăн Генеральнăй Штабĕнчен

Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Совет Çарĕсен Главнокомандующийĕ ВАСИЛЕВСКИЙ Маршал августăн 17-мĕшĕнче Японин Квантунри армийĕн командующине çакăн пек радиограмма панă:

«Японин Квантунри армийĕн штабĕ Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи Совет Çарĕсен Штабне вăрçă ĕçĕсене чарса лартма радио тăрăх сĕнчĕ, çав сĕнӳре Японин Маньчжурири хĕçпăшаллă вăйĕсем парăнасси çинчен пĕр сăмах та каламан.

Çав вăхăтрах Япони çарĕсем Совет Союзĕпе Япони хушшинчи фронтăн чылай участокĕсенче контрнаступлени тума пуç парĕç.

Квантунри армин командующине августăн 20-мĕшĕнче 12 сехетрен пуçласа пĕтĕм фрончĕпех Совет çарĕсене хирĕç кирек мĕнле вăрçă ĕçĕсене те чарса лартма, хĕçпăшала пăрахса тыткăна парăнма хушатăп.

Çӳлте асăннă срока Квантунри армин штабĕ хирĕç тăма чарăнасси тата тыткăна парăнасси çинчен приказ кăларса ăна хăйĕн мĕнпур çарĕсем патне çитерме пултартăр тесе паратăп.

Япони çарĕсем хĕçпăшала пама тытăнсанах, Совет çарĕсем вăрçă ĕçĕсене чарса лартаççĕ.

1945 çулхи августăн 17-мĕшĕ, 6 сехет (Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи вăхăтпа)».

Китай Республикин Ĕç тăвакан Юань Председателĕ Сун Цзы-вень господин Мускавран тухса кайни

Августăн 15-мĕшĕнче Китай Республикин Ĕç тăвакан Юань Председателĕ Сун Цзы-вень господин тата унпа пĕрле килнĕ Китай Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен вице-министрĕ Ху Ши-цзе господин, Цян Чан-чжао господин, Чжан Фу-юнь господин тата ыттисем те Мускавран тухса кайнă.

Центральнăй аэродромра вĕсене çаксем ăсатса янă: СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ С. А. Лозовский, Совет Союзĕн Китайри Посолĕ А. А. Петров, Тулашри суту-илӳ Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Д. Крутиков, Мускав Совет Председателĕн Заместителĕ М. А. Яснов, генерал-лейтенант К. Р. Синилов, СССР Наркоминделĕн 1-мĕш Инçетри Хĕвелтухăç отделĕн Заведующийĕ Г. И. Тункин, СССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн Заведующин Заместителĕ Г. И. Фомин.

Çавăн пекех тата каякансене çаксем ăсатса янă: Китай Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Ван Ши-цзе, Китай Республикин Посолĕ Фу Бин-чан господин пуçпулса тăракан Китай посольстви, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Посолĕ А. Гарриман господин, Великобритани Посолĕ сэр Арчибальд Керр, Франци Республикин Посолĕ генерал Ж. Катру тата ыттисем те.

Ăсатса янă чухне хисеплĕ хурал тăратнă, Китай Республикипе Совет Союзĕн Государство Гимнĕсене каланă.

Аэродрома Китай тата Совет Союзĕн флагĕсемпе илемлетнĕ.

Совет Союзĕпе Болгари хушшинчи дипломатиллĕ çыхăну çĕнĕрен пуçланать

Августăн 14-мĕшĕнче Союзниксен Болгарири Контроль Комиссийĕн Председателĕн Заместителĕ генерал-полковник С. С. Бирюков Совет Правительстви хушнипе Болгари премьер-министрне Кимон Георгиев господина Совет Правительстви Болгарипе çĕнĕрен дипломатиллĕ çыхăну пуçласа яма тата пĕр-пĕрин патне посланниксем яма йышăнни çинчен пĕлтернĕ.

Пĕлтерӳре çапла каланă: СССР Правительстви Болгарипе дипломатиллĕ çыхăну пуçласа яма йышăнчĕ, мĕншĕн тесен Болгари 1944 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕнчен пуçласа, Германие хирĕç пынă вăрçа Пĕрлешнĕ Нацисем енне тăрса активлăн хутшăнчĕ, Болгари халăхĕ хăйĕн кĕрешĕвĕпе Германие аркатса тăкма пулăшрĕ, çавăн пекех тата Болгари перемири çинчен тунă килĕшӳре кăтартса панă обязательствăсене те пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пычĕ.

Болгари правительстви Совет Правительстви пĕлтернине кăмăллăн хапăлласа йышăннă, хăй енчен çав пĕлтерӳпе пĕтĕмĕшпех килĕшни çинчен пĕлтернĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР халăх артисткин ятне парасси çинчен

Театр искусствинче уйрăмах паллă ĕçсем тунăшăн Ольга Ивановна ЫРЗЕМЕ—Чăвашсен государство академи театрĕн артисткине Чăваш АССР халăх артисткин ятне парас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 çулхи августăн 16-мĕшĕ.

Колхозри çирĕп дисциплина—колхозăн вăйĕ тата тĕрекĕ

Кашни колхозник кунне 10—12 сехетрен кая мар ĕçлемелле

Тырă вырмалла—çынсем çырлара

ЙĔПРЕÇ. (Телефонпа). «Путиловка», «Красный фронтовик», «Герой», «МОПР» колхозсенче пикенсе ыраш выраççĕ. Юлашки икĕ-виçĕ кун хушшинче 50—60 гектар вырнă, кĕлтесене лайăх типĕтсе çĕмеле хывнă. Çĕмелри тырă мĕнле тăнине кашни кунах ватă колхозниксем тĕрĕслесе тăраççĕ, час-часах çĕмеле салатса типĕтеççĕ. «Путиловка» колхозра 2 жнейкăпа выраççĕ, кунта тата 2 юсавлă жнейка пур, анчах вĕсемпе усă курмаççĕ-ха. «МОПР» колхозра икĕ жнейкăпа кашни кунах 8 гектар выраççĕ.

Анчах «Красный Октябрь» колхозра пĕр гектар та вырман. Колхоз председателĕ Никитин мĕнпур ĕç вăйне ыраш вырнă çĕре мобилизацилес вырăнне, çынсене çырлана тата кăмпана кайма ирĕк панă. Вăйпитти арçынсемпе хĕрарăмсем халĕ те хăйсене валли утă çулаççĕ.

Крупская ячĕпе тăракан колхозра уяр тăнă 3 кун хушшинче те 2 гектар кăна вырнă.

Тырпул пулса çитнĕ, ыраш тăкăнма пултарать, çуртыррисем те пулса çитессĕ, анчах та çынсем вăрманта хăйсен ĕçне тăваççĕ.

П. КУРАКОВ.

„Культура" колхоз тырă вырма васкамасть

КӲКЕÇ. Шуркка ял Советĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз тырă вырса пухас ĕçе лайăх организациленĕ. Ĕçлеме пултаракан кашни колхозник уйхирте ĕçлет, килте ларакан пĕр çын та çук. Жнейкăпа тата алăпа вырнисĕр пуçне, кĕреплеллĕ çавасемпе те анлăн усă кураççĕ. Авăн çапма молотилкăсене юсаса лартнă. Ку ĕçре уйрăмах Отечественнăй вăрçă инваличĕ С. Ефимов юлташ тăрăшса ĕçлерĕ. Колхоз правленийĕ ăна лайăх ĕçленĕшĕн иртнĕ çул 2 сысна çури парса премилерĕ.

Çавăн пекех «Победа» колхозра та ыраш вырас ĕç пысăк хăвăртлăхпа пулса пырать. Колхозниксем уйхирте пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Кунта кашни бригадăрах авăн çапмалли витнĕ итемсем пур. Михĕ-шăналăксем те çителĕклĕ. Тырпул хумалли амбарсене лайăх çуса тасатнă, дезинфекциленĕ.

Асăннă колхозсен председателĕсем пулса Е. Петрова тата Виноградов коммунистсем ĕçлеççĕ. Вĕсем колхозри пур ĕçе те большевикла ертсе пыраççĕ.

Анчах çав вăхăтрах «Культура» колхоз паянхи куна çитсе те ыраш вырма тухман. Колхоз председателĕ И. Марков юлташ колхоз ĕçĕпе сахал интересленет. Колхоз ку тарана çитсе те ыраш вырма тухманнине вăл çанталăк йĕпе тăнипе ăнлантарса парасшăн. Çавăн пекех колхоз çĕрулмине те купалаcа пĕтермен. Колхозăн авăн çапмалли 2 итем пур, анчах вĕсен тăррисене витсе хатĕрлемен.

Л. ФЕДОРОВ.

УЙРĂМ СДЕЛЬЩИНĂПА ĔÇЛЕÇÇĔ

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). «Верный путь» колхозра ыраш вырнă çĕрте малтанхи кунран пуçласах уйрăм сдельщинăпа ĕçлеççĕ. Нумай колхозницăсем нормăна ытлашшипех тултараççĕ: М. Бочкарева, Л. Смирнова, Ю. Васильева юлташсем куллен нормăна 120—130 процент тултарса пыраççĕ. Плотникова юлташ конюхра ĕçлет, анчах та пушă вăхăтра ыраш вырма тухать, хăйĕн нормине ытлашшипех тултарать. Юлия Атаманова, М. Атаманова тата Андрей Власов агитатор пулса ĕçлеççĕ, вĕсем колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе тунипе пĕрлех, хăйсен нормине те ытлашшипех тултараççĕ. Кашни бригадăрах боевой листоксем кăлараççĕ.

Колхоз авăн çапма тата государствăна тырă пама тытăнчĕ.

В. ГУСЬКОВ.

Кок-сагыз вăрлăхне пухаççĕ

Елчĕк районĕнче кăçал 33 колхозра кок-сагыз плантацийĕсем пур. Вĕсенчен 9 колхозĕнче вăрлăхлăх хăварнă икĕ çул ӳсекен кок-сагыз плантацийĕсем 31 гектар ытла шутланаççĕ. Кăçал кок-сагыз тымарне тата унăн вăрлăхне туса илес тĕлĕшпе уйрăмăнах «Путь Ленина», «Осоавиахим», «Автогигант» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче лайăх ĕçлеççĕ.

«Путь Ленина» колхозра кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе ĕçлеме ятарласа бригада тунă. Вăл бригадăна Отечественнăй вăрçă инваличĕ Петр Козлов ертсе пырать. Кунта 2 çул ӳсекен кок-сагыз 2,5 гектар. Çак лаптăкран кок-сагыз вăрлăхне пурĕ 25 килограмм пухса илмелле пулсан, кунта 50 килограмм пухса илнĕ. Патрекелĕнчи «Осоавиахим» колхозра та кăçал лайăх ĕçлеççĕ. Кунта кок-сагыз туса илес енĕпе ĕçлекен звенона Елизавета Ястребова ертсе пырать. Вĕсен вăрлăхлăх хăварнă лаптăк 4 гектар шутланать. Çак лаптăкран 70 килограмм пухса илнĕ.

Анчах та районра кок-сагыз плантацийĕсем çине çавăрăнса пăхман колхозсем те пур. Ку тĕлĕшпе вара «Победа», «Октябрь», «Заря», «КИМ», «2-ая пятилетка» тата Крупская ячĕпе тăракан колхозсем уйрăмăнах палăрса тăраççĕ. Çак колхозсенче кок-сагыз плантацине пĕтĕмпех çумкурăкĕ пусса илнĕ.

«Осоавиахим», «Комбайн», «Смычка», «Канаш», Ленин тата Крупская ячĕсемпе тăракан колхозсенче кок-сагыз тымарне кăларса пухма тытăнчĕç.

Н. ПРОХОРОВ,
Районри «Растнаучук» конторин заведующийĕ.

Тикĕт тума тытăннă

Йĕпреç районĕнчи «Красный металлист» колхоз тикĕт тума тытăннă. Кунта кашни кунах 25—30 килограмм тикĕт юхтараççĕ. Колхоз халĕ кӳршĕри колхозсене те тикĕт сутма пултарать.

Маньчжури ăшнелле

Каçĕ ăшă пулнă. Сопкăсем урлă Лăпкă океан енчен йывăр пĕлĕтсем шунă. Гиршанов старшина боец-разведчиксен пĕр ушкăнне ертсе кайнă. Японецсем хăйсен позицийĕсен çав участокĕнче вăйлăн тĕреклетнĕ вырăн туса хунă. Сопкăсем тăрринче вĕсем 15 дотпа дзот ытла туса лартнă. Сопка айĕнче траншейăсем чавса хунă, йĕплĕ пралук карса тухнă. Сĕм тĕттĕм каç, чĕреслетсе çумăр çунă вăхăтра, боецсене вăрттăн илсе пырса тăшман хушшине кĕрсе каяс тесе, питĕ ăста ĕçлемелле пулнă.

Боецсем тĕреклетнĕ высота айне çитнĕ те выртнă. Сывлăша сигнал ракети ялкăшса хăпарнă. Тĕттĕм çĕрте снарядсем çурăлни çутăла-çутăла кайнă. Ку ĕнтĕ пирĕн минометчиксем пеме пуçланине пĕлтернĕ. Штурмлакан ушкăнсем малалла талпăннă. Вĕсем дотсене хупăрласа илнĕ, дот амбразури витĕр гранатăсем ывăтнă, çакăн хыççăн дотсем патне сирпĕнтерсе ямалли ещĕксем иле-иле пынă. Тăшманăн бетонран тунă пемелли вырăнĕсем пĕрин хыççăн тепри сывлăшалла сирпĕне-сирпĕне кайнă.

Штурмлакан ушкăнсене Гиршанов старшина разведчикĕсем ертсе пынă. Японин дочĕн ăшне гранатăсем ывăтнă хыççăн, вĕсем хăйсем шалалла кĕрсе кайнă. Тимĕрпе бетонран тунă дотра пирĕн боецсем ывăтнă гранатăсен тĕтĕмĕ те сирĕлмен-ха. Япони салтакĕсемпе офицерĕсен виллисем нумай выртаççĕ. «Вилнисенчен» пĕри хускалнине, вăл автомат ярса илме хăтланнине старшина сиснĕ. Тепĕр самантра, старшина пырса çапнине пула, японец аллинчи хĕçпăшал тухса ӳкнĕ.

Подразделени тĕттĕм çĕрте питĕ шăппăн малалла куçса пынă. Вĕсем хушшинче Толкчелов салтак пулнă. Малта винтовкăран пени илтĕнсе кайнă, унтан çĕрлехи шăплăха кисретекен сасă илтĕннĕ. Пулеметсенчен, тупăсенчен пеме пуçланă...

Боецсем каллех выртнă. Тĕттĕмре Толкчелов салтак пулеметран пенине сиснĕ. Ку ĕнтĕ тăшман дзочĕ пулнă. Дзот высота çине хăпарнă çĕрте вырнаçса тăнă. Хăвăрт решени йышăннă боец хăйĕн кӳршине—пулеметчика çапла каланă:

— Эсĕ амбразура еннелле персе тăр, эпĕ дзот патнелле шуса каятăп.

Сопкăн чуллă çийĕпе вăл малалла куçса пынă. Йĕри-тавра пульăсем шăхăрнă, вĕсем йывăç çулçисене тата-тата кайнă. Анчах боец çĕр çумне лăпчăнса малаллах шуса пынă. Акă дзот патне те çитнĕ вăл. Боец хăвăрт граната ункине кăларнă та граната ывăтнă. Пĕр граната хыççăн татах тепĕрне ывăтнă. Таврари шăплăха взрыв сассисем хускатнă. Дзот енчен пеме чарăннă.

Чăтлăх тайга витĕр, сăрт хырçисем урлă, вăйлă тĕреклетнĕ пунктсем тунă шурлăхсемпе сопкăсем урлă, тăшман хаяррăн хирĕç тăрса кĕрешнине пăхмасăрах, пирĕн чаçсем Маньчжури ăшнелле кĕрсе пыраççĕ. Кашни дзотшăн, кашни ту хушшинчи сукмакшăн, халăх пуранакан кашни пунктшăн йывăр çапăçусем пыраççĕ.

В. АБРАМОВ,
ИНÇЕТРИ ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 1-МĔШ ФРОНТ, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ).

Тырпула хăвăрт тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртер, государствăна тырă памалли плана пĕтĕмпех тата срокчен тултарар

Республикăри уйхирсенче ялхуçалăх çулĕн чи хĕрӳллĕ вăхăчĕ çитрĕ.

Тырпул пухса кĕртес паха задачăна тĕплĕн ăнланса илнĕ çĕрте, тырпул пухса кĕртме вăхăтра тата тĕплĕн хатĕрленнĕ çĕрте тырпула пухса кĕме йĕркеллĕ тытăнчĕç. Малта пыракан Вăрнар районĕнчи колхозсенче августăн 16-мĕшĕ тĕлне вырмалли кĕрхи тырăсем 150 гектар кăна юлнă, кунта çурхи тырăсене те вырма пуçланă; Елчĕк районĕнчи колхозсенче 9 пин гектар ытла вырнă, тепĕр икĕ кунтан кунта кĕрхи тырăсене вырса пĕтереççĕ; Советски, Чурачăк, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи колхозсенче тырпул пухса кĕртес ĕçе чылай лайăх организациленĕ. Пирĕн малта пыракан колхозсем кĕрхи тырăсене пухса кĕртнĕ хыççăн çурхи тырăсене пухса кĕртме тытăнаççĕ тата государствăна тырă памалли плана йĕркеллĕ тултарса пыраççĕ.

Анчах та, пĕтĕмĕшпе илсен, республикăра тырпул пухса кĕртес ĕç лайăх пырать тесе калама çук-ха. Нумай районсем кĕрхи тырăсене вырма кая юлса тытăнчĕç, тытăннă хыççăн та ĕçе васкамасăр туса пычĕç. Çакăн пек ĕçленине пула ĕнтĕ Кувакино, Йĕпреç, Улатăр, Первомайски районсенчи колхозсем кĕрхи тырăсене пухса кĕртес тĕлĕшпе чылай кая юлса пыраççĕ. Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Канаш тата ытти районсем те вĕсенчен малах кайман.

Çак юлса пыракан районсемпе колхозсенче мĕн юлашки вăхăта çитиччченех тырра суйласа вырасси çинчен, тырă пиçсе çитменни çинчен калаçрĕç, унтан вара пĕтĕм айăпа йĕпе-сапа çанталăк çине яма тытăнчĕç. Сăмахран, Шупашкар районĕнчи руководительсем: Шупашкар районĕ вăл çурçĕрти район, çавăнпа та кунти колхозсем тырпул пухса кĕртме каярах тытăнаççĕ, тесе çине тăрсах калаçрĕç. Сĕнтĕрвăрри районĕнче вара юлашки вăхăта çитиччченех ларусем, канашлусем туса ирттереççĕ, тырпул пухса кĕртес ĕçе чăннипе ертсе пымаççĕ, тырпул пухса кĕртес ĕçе хăвăртлатас тĕлĕшпе нимĕн те тумарĕç. Хăшпĕр колхоз руководителĕсем тырпул пухса кĕртес ĕçе юрнех е ответлăха туйса илмен пирки вăраха ярса пычĕç. Сăмахран, Ишлей районĕнчи пĕр колхоз председателĕ Илюхина юлташ районри работникĕсене çапла вĕрентсе каланă: «Эсир нимĕн те ăнланмастăр, нимĕн те курмастăр, тырă халĕ симĕс вĕт», тенĕ. Çав вăхăтрах кӳршĕри колхозсем таçханах тырă вырма тытăннă. Хăшпĕр колхоз председателĕсем вара, тырпул пухса кĕртес ĕçе ертсе пырас вырăнне, хăнана кайса çӳресе вăхăта ирттереççĕ. Çаксене пула ĕнтĕ тырпула массăллăн пухса кĕме тытăнас ĕç вăраха юлчĕ.

Çапла ĕнтĕ, ĕç кунта колхозсемпе районсен хăйсене расна уйрăмлăхсем пуррипе мар, уйхирти ĕçе большевикла организацилеме тата мĕнпур колхозниксене, çавăн пекех тата ялти ĕçлеме пултаракан мĕнпур халăха тырпула вăхăтра тата лайăх пухса кĕртме мобилизацилеме пĕлменнипе пулать. Уйхир ĕçне тивĕçлипе организацилесе туса пынă пулсан, республикăри пур районсем те кашни кун пиншер гектар е ытларах пухса кĕме пултарнă, çапла вара халĕ кĕрхи тырăсене пур çĕрте те вырса пĕтернĕ пулăттăмăр.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ темиçе кун каярах Чăваш АССР-ĕнчи колхозсенче тырпул пухса кĕртес ĕç мĕнле пыни çинчен сӳтсе-явса, парти райкомĕсен, райисполкомсен, çĕрĕç органĕсен тата колхоз руководителĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. Бюро тырпул пухса кĕртес ĕçе татăклăнах хăвăртлатма хушрĕ.

Тырпул пухса кĕртес ĕçе татăклăнах хăвăртлатмалла тени мĕне пĕлтерет-ха?

Çакă ĕнтĕ, чи малтанах, уйхирти ĕçе тĕрĕс организацилеме тата колхозниксен ĕç тухăçлăхне ӳстерме кирлине пĕлтерет. Пирĕн чылай колхозсенче шăпах ĕнтĕ çак тĕп ыйтура ĕç япăх пырать. Нумай артельсенче тырпул пухса кĕртес ĕçе пур колхозниксене те тата ялти ĕçлеме пултаракан пур çынсене те явăçтарман. Чылай колхозниксем тата тырпул пухса кĕртес ĕçе явăçтарнă çынсем хăйсене панă заданисемпе ĕç нормисене тултараймаççĕ. Бригадăсемпе звеносенче алăпа тумалли ĕçсенче—тырă вырнă, кĕлте çыхса купаланă тата кĕлте турттарнă çĕрте, тăкăнса юлнă пучахсене кĕреплепе пухнă çĕрте уйрăм сдельщинăпа тата пĕчĕк ушкăнсемпе уйрăм участок çинче ĕçлес йĕркепе çителĕклĕ усă курмаççĕ, вăрлăх тасатнă е турттарнă çĕрте уйрăм çынсене тата пĕчĕк ушкăнсене заданисем парса ĕçлеттерес йĕркепе çителĕксĕр усă кураççĕ. Нумай колхозсенче тырпул пухса кĕртес тата авăн çапас ĕçре çирĕп кун йĕрки çук, çавна пула ĕнтĕ колхозсенче ирех ĕçлеме пуçласа çĕрле пуличченех ĕçлемеççĕ, колхозниксен ĕç вăхăчĕпе туллин усă курмаççĕ. Çакна пула тырпул пухса кĕртес ĕç вăраха юлса пырать, çакăн пирки вара тырпул тăккаланать тата государствăна тырă парасси вăраха юлса пырать.

Колхозсенче ĕçе çакăн пек япăх организацилени тата ĕç дисциплини начар пулни—вырăнти парти тата совет организацийĕсем чылайĕшĕ колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленинчен, тырпул пухса кĕртес, авăн çапас тата государствăна тырă леçсе парас тĕлĕшпе колхозниксен ĕçне тĕрĕс организацилес енĕпе колхоз правленийĕсемпе председателĕсене çителĕклĕ пулăшса паманнинчен килет.

И. М. ЧАРЫКОВ,
ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ.

Паллă ĕнтĕ, колхозниксен ĕçне организацилес тĕлĕшпе колхоз председателĕсем тĕп вырăн йышăнса тăмалла. М. И. Калинин çапла калать: «Тырпул пухса кĕртнĕ тапхăрта тĕп ответлăх колхоз председателĕсемпе вĕсен çывăх помощникĕсене—звеньевойсене тивет. Вĕсен ĕçĕнчен вара колхозăн пĕтĕм ăнăçлăхĕ килет. Тырпул пухса кĕртес ĕç колхоз руководителĕсене çав тери тăрăшса ĕçлеме хушать. Хальхи вăхăтра, нумайĕшĕ çитменнипе пула, ялхуçалăх машинисем, инвентарьсем, ĕç вăйĕ те çитменнипе пула, ку ĕç татах та йывăрланать. Çаксем пурте ĕнтĕ колхоз председателĕсене организациллĕ пултарулăх кăтартма, тырпул пухса кĕртес ĕçре хăйсен аллинчи пур майсемпе те туллин усă курма хушаççĕ. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра председатель вăл—çапăçу вăхăтĕнчи командир пекех... Тырпул пухса кĕртес ĕç хăй те, çапăçу пекех, организацилĕх çеç мар, тата ĕçе тăрăшса тĕплĕн тума хушать».

Çак паха задачăна пурнăçа кĕртнĕ чухне колхоз председателĕсене вырăнти парти организацийĕсен тивĕçлĕ пулăшу парса пымалла. Вĕсен ялхуçалăхĕнче ĕçлеме пултаракан пур колхозниксемпе вĕсен çемьисене те, çавăн пекех тата ялта пурăнакан колхозник мар çынсене, вĕсем промышленноçра е транспортра ĕçлемеççĕ пулсан, ялхуçалăх ĕçне явăçтарас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Вĕсен колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетмелле, çитĕннĕ колхозниксем пурте кашни кунах ĕçе тухмалла тата ĕç нормисемпе заданисене тултарса пымалла тăвас пулать. Парти райкомĕсемпе райисполкомсен колхозсенче тырпул пухса кĕртес ĕçре тата ялхуçалăхĕнчи ытти ĕçсенче те çирĕп кун йĕрки туса çирĕплетме пулăшмалла. Ĕçлеме пултаракан колхозниксен тырпул пухса кĕртнĕ, авăн çапнă тата государствăна тырă панă вăхăтри ĕçкунĕн тăршшĕ сахалтан та 10—12 сехет пулмалла. Парти райкомĕсен кашни колхозрах ĕç дисциплини мĕнле тăнине кашни эрнере пĕрре тĕрĕслемелле. Тĕрĕсленĕ чухне уйрăм колхозниксем мĕншĕн ĕçе тухманнине тĕпчесе пĕлмелле, колхозри ĕç дисциплинине çирĕплетес тата ĕçе организацилес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла; колхозсенче ялхуçалăх артель уставĕн 17-мĕш статьине пурнăçласа пымалла.

Тырпул пухса кĕртес ĕçе вăраха хăварас мар тесе тата тырпула тăккаланасран сыхлас тесе, халĕ тырпул пухмалли пур хатĕрсемпе те—комбайнсемпе, ансат машинăсемпе, çавасемпе тата çурласемпе туллин усă курмалла; час тăкăнакан культурăсемпе сортсене чи кĕске вăхăтра пухса кĕртмелле. Пирĕн тырпула машинăсемпе пухса кĕртес ĕç çине уйрăмах тимлĕн пăхмалла, машинăсемпе туллин усă курсан тин эпир тырпул пухса кĕртес ĕçе чылай хăвăртлатма пултаратпăр. Çав вăхăтрах хăшпĕр колхоз председателĕсем тырпул пухса кĕртмелли машинăсене тивĕçлине хакламаççĕ, район руководителĕсем вара çакăн пек фактсене асăрхамаççĕ, тырпул пухса кĕртме тытăннă малтанхи кунран пуçласах машинăсене пурне те ĕçе ярас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Республикăри МТС-сен комбайнĕсем халĕ те ĕçе тытăнманнине, малта пыракан районсенче те жнейкăсемпе тата косилкăсемпе темиçешер гектар çеç пухса кĕртнине йĕркеллĕ тесе шутлама пулать-и-ха? Тырă пулса çитмен пирки комбайнсемпе, жнейкăсемпе тата молотилкăсемпе усă курма май килмест, тесе калаçассине пĕтермелле. Тырпул пухса кĕртмелли пур машинăсене те ĕçе ярса, уяр çанталăкăн чи кĕске тапхăрĕсенче те вĕсемпе май килнĕ таран туллин усă курассине организацилемелле.

Кăçал тырпул пухса кĕртес ĕç тата государствăна тырă памалли плана вăхăтра тултарас ĕç ăнăçлăхĕ колхозсенче витнĕ итемсем, лупасайсем, сушилкăсемпе авăнсем тунинчен чылай килет, мĕншĕн тесен кăçал çанталăк тăтăшах йĕпе-сапаллă пулма пултарать. Ку тĕлĕшпе районсемпе колхоз руководителĕсен çине тăрсах ĕçлеме тивет. Халĕ эпир республикăри пур колхозсем те çанталăк кирек епле тăрсан та тырпул пухса кĕртме, авăн çапма тата государствăна тырă пама пултараççĕ, тесе калама пултараймастпăр. Витнĕ итемсем, сушилкăсемпе авăнсем тăвас ĕç уйрăмах Йĕпреç, Улатăр, Пăрачкав, Чкаловски, Первомайски, Кувакино, Красноармейски тата ытти районсенче япăх пырать. Çак районсенче витнĕ итемсемпе сушилкăсене юсаса та пĕтермен, вутă хатĕрлесе хуман тата тырпула типĕтмешкĕн опытлă колхозниксем уйăрман. Витнĕ итемсем, сушилкăсемпе авăнсем тăвас ĕç çине тирпейсĕр те тивĕçсĕр пăхнине пула, халех ĕнтĕ тырпул пăсăлнин тата тăккаланнин тĕслĕхĕсем пур. Витнĕ итемсемпе сушилкăсене хатĕрлесси çинчен эпир ытлашшипех калаçатпăр. Анчах халĕ ĕнтĕ сăмахран ĕçе куçмалли вăхăт çитрĕ. Халĕ ĕнтĕ, кирек епле çанталăк вăхăтĕнче те татти-сыпписĕр авăн çапмалла тăвас тесе, кашни колхозра, кашни пысăк бригадăра витнĕ итемсемпе сушилкăсем туса лартмалла.

Тырпула кĕлете кĕртсе хурсан тин тырпул пухса кĕртес ĕçĕн результачĕсем çинчен калама пулать. Тырра вырасси, купаласси тата капана хывасси,—кусем пурте ĕçĕн çур пайĕ çеç. Ĕçĕн ăнăçлăхне авăн çапни татса парать; авăн çапассине кая хăварни тырпула нумай тăккалантарать. Çавăнпа та тырă вырас ĕçе татăклăнах хăвăртлатнипе пĕр вăхăтрах капан тăвассине тата авăн çапассине хăвăртлатмалла.

Анчах та республикăри нумай колхозсенче тырпул пухса кĕртес тата авăн çапас ĕçре сиенлĕ черетлĕх пурри палăрать, вĕсем авăн çапассине чи кайри вырăна хăварнă. Республикăри нумай районсенче авăн çапма та тытăнманни çав сиенлĕ йăларан килет те ĕнтĕ.

Халĕ авăн çапассине пур çĕрте те хăвăртлатмалла, ăна тырă вырассинчен тата ытти ĕçсенчен нимĕн чухлĕ те кая хăвармалла мар. Çак ĕçе ăнăçлă тăвас тесен, кашни колхоза пилĕк кун хушшинче мĕн чухлĕ авăн çапмаллине кăтартса задани памалла, çав задание вара пĕр сăмахсăр пурнăçа кĕртсе пымалла тăвас пулать. Халех мĕнпур молотилкăсене юсаса пĕтермелле те вĕсене талăкĕ-талăкĕпе ĕçлеттермелле. Молотилкăсемпе ĕçлеме уйрăм бригадăсем тумалла.

Пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксем, Кубаньри колхозниксем патриотла чĕнсе каланине ырласа, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухтăнчĕç, тырпул пухса кĕртме тытăннă малтанхи кунсенчен пуçласах государствăна тырă леçсе парассине организацилеме, государствăна тырă памалли плана ноябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр пĕтĕмпех тата срокчен тултарма, кĕрхи тырăсене 1945 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр кĕске вăхăтра тата агротехника тĕлĕшĕнчен лайăх акса пĕтерме обязательство илчĕç. Çак обязательствăсене пурнăçа кĕртес тесен, государствăна тырă парассине вăраха хăварас мар тата кĕрхи тырăсене вăхăтра акса хăварас тесен, республикăри колхозсен, чи малтанах, хĕрсех авăн çапма тытăнмалла.

Парти, совет тата çĕрĕç органĕсен тырпул пухса кĕртес мĕнпур ĕçсенче пахалăх тата тырпул тăккаланассипе кĕрешесси çине тимлĕн пăхмалла. Çакă ĕнтĕ тырра вырса пухнă чухне ăна типтерлĕ тыткаламаллине, çулса пăрахнă тырра вăхăтра кĕлтене çыхса хумаллине, кĕлтесене типтерлĕ çĕклесе пухса капана хывмаллине, çапнă тырра юсавлă урапасемпе çеç турттармаллине, уйра тырă вырса кайнă хыççăнах пучахсене тĕплĕн пухмаллине, çапнă тырра уçă çĕрте сыхласа усрама юраманнине, тырра çийĕнчех тасатмаллине, типĕтмеллине тата государствăн склачĕсемпе колхоз склачĕсене турттарса каймаллине пĕлтерет. ВКП(б) райком секретарĕсен, райисполком председателĕсен, райçĕрĕç пайĕн заведующийĕсемпе главнăй агрономĕсен, МТС директорĕсемпе старши агрономĕсен тырпул пухса кĕртнин пахалăхне хăйсен уя тухса тĕрĕслемелле. Тырпул тăккаланассине пĕтерес тĕлĕшпе тата колхоз тырпулне çаратма парас мар тесе, тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Уйхир бригадисен бригадирĕсен кашни колхозникрен куллен хи ĕçе тĕрĕслесе йышăнмалла, колхоз председателĕсем вара участокри ĕç пĕтнĕ хыççăн илсе кунран кая юлмасăр уйхир бригадисенчен йышăнмалла.

Халĕ колхозсен, парти, совет тата хатĕрлев организацийĕсен чи пысăк государствăна тырă памалли плана тултарасси пулать. Пирĕн Тăван çĕршыв тата фронт тырпул ыйтаççĕ. Тухăçлă тырпул колхозсене крассин, пирравăр, атă-пушмак, тимĕр япаласем тата ытти тĕрлĕ таварсем илсе килет. Пирĕн республика Отечественнăй вăрçă çулĕсенче хăйĕн обязательствисене тӳрĕ кăмăлпа тата вăхăтра тултарса пычĕ. Кăçал та эпир государствăна тырă памалли плана пĕтĕмпех тата вăхăтчен тултарма сăмах патăмăр. Хамăрăн сăмаха чыслăн пурнăçа кĕртес тесен, пирĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлемелле, мĕнпур майсемпе усă курмалла. Государствăна тырă парас ĕç халĕ калама çук япăх пырать-ха. ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ палăртнă график пурнăça кĕрсе пымасть. Республикăри нумай районсем государствăна тырă пама тытăнман та. Государствăна тырă парас ĕç çакăн пек тăни районсемпе колхоз руководителĕсене халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушать. Графикра палăртнине тултарас тата малашне кашни пилĕк кунхи заданисене вăхăтра пурнăça кĕртсе пырас тесен, пирĕн государствăна тырă памалли хăвăртлăха халĕ икĕ хут ӳстермелле. Авăн çапас тата çапнă тырра типĕтес ĕçе тивĕçлипе организацилемелле. Кашни колхозăн кашни кунах тырă памалла тăвас пулать. Кирек епле çанталăкра та транспорт бригадисен кунне 2—3 хут тырă леçме каймалла. Ĕçе çакăн пек организацилесен çеç государствăна тырă парас ĕçе лайăхлатма пулать.

Районри парти комитечĕсен, ялти парти тата комсомол организацийĕсен задачи—тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра агитациллĕ-массăллă ĕçе анлăн сарса ярасси пулать. Кашни колхознике, кашни колхозницăна СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1945 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленипе ăнлантарса памалла. Колхозсемпе бригадăсенче тырпула вăхăтра пухса кĕртессишĕн, государствăна тырă памалли плана срокчен тултарассишĕн, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура малти вырăна тухассишĕн чăн-чăн социализмлă ăмăрту организацилемелле.

Лăпкă океан çинчи лару-тăру

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио хăйĕн каçхи хыпарĕсенче çакăн пек пĕлтернĕ: августăн 15-мĕшĕнче Токио çывăхĕнче сывлăшри çапăçура акăлчансен темиçе летчикĕ пĕтнĕ. Вĕсем ирхине вĕççе кайнă пулнă, анчах Япони парăнни пирки каялла таврăнма приказ илнĕ. Летчиксем çапла вара вăрçă пĕтнĕ тесе шутланă. Çав самантра вĕсене кĕтмен çĕртен японецсен 15—20 истребителĕ тапаннă. Çавăн пекех тата Япони самолечĕсем союзниксен карапĕсене те атакăланă.

ЛОНДОН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпарсем тăрăх, союзниксен Лăпкă океан çинчи тинçĕр вăйĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: Америка çарĕнчи авиаци самолечĕсем августăн 12-мĕшĕнче Японири Кюсю утравĕпе Сикоку утравне тапаннă чухне Миядзаки хулинчи çуртсене пурне те тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă, çавăн пекех тата Мацуяма хулинчи аэродром çинче горючи складне тата самолетсем нумай пĕтерсе тăкнă.

ВАШИНГТОН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: августăн 12-мĕшĕнче американецсен 3-мĕш флотĕнчи çăмăл крейсерĕсем тата эсминецĕсем Курильски утравсем шутне кĕрекен Мацува утравĕпе Парамусир утравне вăйлăн пенĕ.

Малтанхи даннăйсем тăрăх, американецсен 3-мĕш флотĕнчи авиаци августăн 12-мĕшĕнче Токио хулине тапаннă чухне унти аэродромсене тата ытти объектсене те чылай пысăк сиен кӳнĕ.

ВАШИНГТОН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Лăпкă океан çинчи стратегиллĕ сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщикĕсем Марифу хулинчи чугун çул депоне тата Японири Куре хулинчен кăнтăрхĕвеланăçнерехре японецсен суднисене тапаннă. Тапану халĕ те çаплах пырать.

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпарсем тăрăх, союзниксен Лăпкă океан çинчи тинçĕр вăйĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: августăн 13-мĕшĕнче американецсен Окинава утравĕ çинчи самолечĕсем Цусима проливĕнче тата Кюсю утравĕнчен кăнтăртарахра японецсен пĕр танкерне тата грузсем турттаракан 30 суднăна шыва путарнă. Американецсен йывăр бомбардировщикĕсем японецсен Формоза утравĕ çинчи сооруженийĕсене тапаннă.

Трумэн пресс-конференцире калани

ВАШИНГТОН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Президент Трумэн пресс-конференцире çапла пĕлтернĕ: Японие парăнтарас тĕлĕшпе союзниксем тăратнă условисене японецсем йышăннă, тенĕ.

«Паян кăнтăрла иртсен,—тенĕ Трумэн,—эпĕ Япони правительствин посланине илтĕм. Çакă вăл Япони правительстви патне государство секретарĕ августăн 11-мĕшĕнче янă послани çине панă ответ пулса тăрать. Çав ответ Япони Потсдамри Деклараципе, пĕр сăмахсăрах парăнассипе палăртаканскере, пĕтĕмĕшпех йышăннипе пĕлтерет тесе шутлатăп эпĕ. Анчах çав ответра парăнмалли условисене официальнă йĕркепе май килнĕ таран хăвăртрах алă пусмалли мероприятисене тĕплĕпрех палăртни курăнмасть-ха. Япони парăннипе йышăнма Макартур генерала союзниксен верховный командующийĕ пулма уйăрса лартнă. Англипе Россия тата Китай та çавăн пекех пысăк вырăн йышăнса тăракан аслă офицерсене представительсем пулма уйăраççĕ».

Трумэн Совет Союзĕн, Англин, Китайăн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствисем патне Япони правительстви янă нотăна вуласа панă. Вăл çапла пĕлтернĕ: çара илекенсен йышĕ малашне кашни уйăхрах 80 пин çынран 50 пин çынна çити чакать. Çара 26 çултан çамрăккисене кăна илессĕ, тенĕ.

Эттли тухса калани

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Премьер-министр Климент Эттли çурçĕрте радиопа сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл, Япони парăнни çинчен пĕлтерсе, союзниксем кăларса тăратнă парăнмалли условисем çине Япони панă ответа вуласа панă.

Çакăн хыççăн Эттли Инçетри Хĕвелтухăçĕнче вăрçă ĕçĕсем мĕнле пулса пыни çинчен кĕскен чăрăнса тăнă. Япони хирĕç тăрассине «халĕ пур çĕрте те çĕмĕрсе тăкнă» тенĕ вăл, çавăн хыççăн Эттли Японие хирĕç кĕрешнĕ Британи салтакĕсемпе морякĕсене тата аслă союзниксене пурне те тав тунă.

Эттли сăмахĕ хыççăн радиопа Великобританин, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Совет Союзĕн тата Китайăн государство гимнĕсене каланă.

ЯПОНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНИ

ЧУНЦЫН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Японецсен Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 15-мĕшĕнче 15 сехет те 20 минутра премьер-министр Судзуки хăйĕн кабинетĕнчи мĕнпур министрсемпе пĕрле пĕтĕмпех вырăнтан тухнă. Агентство пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Судзуки кабинечĕ Япони Потсдамри Декларацие йышăннă май вырăнтан тухнă, мĕншĕн тесен лару-тăру улшăннă пирки правительствăн та улшăнма тивет.

ЯПОНИ ÇАР МИНИСТРĔ ХĂЙНЕ ХĂЙ ВĔЛЕРНĔ

ТОКИО, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Домэй Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çар министрĕ Корецика Анами ĕнер çĕрле хăйĕн официальнăй резиденцийĕнче хăйне хăй вĕлернĕ.

Англи парламенчĕн сессийĕ уçăлни

Король сăмахĕ

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Англин çĕнĕрен суйланă парламенчĕн сессийĕ уçăлнă. Сессие уçнă чухне Георг король трон ячĕпе сăмах каланă.

Япони парăнни пирки чарăнса тăрса, Георг король Британи пĕтĕçтерсе тăракан халăхсен çарĕсене тата союзниксене тав тунă. «Манăн правительствăн тĕп тĕллевĕ,—тенĕ вăл,—мир туса хурас тĕлĕшпе манăн доминионсен правительствисемпе çирĕппĕн пĕрлешсе ĕçлесси тата мире юратакан пĕтĕм халăхсемпе килĕштересси пулать. Çавăнпа ĕнтĕ мирпе ирĕклĕх тата социальнăй чăнлăх пуç пулса тăрĕç, вăрçăра тунă жертвăсем ахаль çухалмĕç».

Малалла король çапла каланă: «Англи министрĕсем, Берлинра Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕпе тата Сталин премьерпа канашланăскерсем, çирĕп никĕс хывреç. Нумай вăхăт хушши вăрçă тискерлĕхне тӳссе пурăннă Европăри халăхсем вăрçă хавшатнă хăйсен çĕршывĕсене çав никĕс çинче юсаса ура çине тăратĕç. Эпĕ ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен советне тунине саламлатăп. Çав совет, кĕç-вĕçех Лондонра пухăнса, татăклă мир тăвас тĕлĕшпе Берлинра пуçланă ĕçе малалла туса пырĕ. Пĕрлешнĕ Нацисен уставне пăхса тухма парламента тăратмалла пулать».

Шалти ыйтусем çине куçса, король çапла каланă: «Правительство промышленноçа вăрçă задачисене пурнăçа кĕртсе пырассинчен мирлĕ задачăсене пурнăçа кĕртсе пымалла тăвас ĕçе хĕрӳллĕн тытăнма шутлать. Кунсăр пуçне правительство экспорт суту-илӳне анлăлатма шутлать. Пирĕн промышленность халăх пурнăçне лайăхлатма май килнĕ таран ытларах пулăштăр тесе, тивĕçлĕ контроль йĕркелемелле е обществăллă пурлăха аслăлатмалла».

Малалла король хăйĕн сăмахĕнче Англи банкĕпе çĕркăмрăк промышленноçне национализацилемелли план çинче чарăнса тăнă. Çакă вăл топливăпа энергетика промышленноçĕн ĕçĕсене пĕтĕçтерсе планламалли ĕçĕн пĕр пайĕ пулса тăрать, тенĕ король.

Правительство, тенĕ король, Индири обществăллă шухăш представителĕсемпе пĕрле Индие самоуправлени прависем хăвăртрах парас тĕлĕшпе хăйĕн мĕнпур вăйне хума пулать.

ФРАНЦИРИ СОЦИАЛИСТСЕН ПАРТИЙĔН СЪЕЗЧĔ

ПАРИЖ, августăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Парижра Францири социалистсен партийĕн нациллĕ съезчĕ уçăлнă. Съезд 5 куна пымалла. Съездра сӳтсе-явмалли тĕп ыйтусем çаксем тăраççĕ: социалистсен партийĕ «Юдор» (тăшмана хирĕç тăракансен демократиллĕ социалистла союзĕ) çине епле пăхасси тата компарти çине епле пăхасси. Ку ыйтупа социалистсен партийĕн генеральнăй секретарĕ Даниэль Мейер доклад туса памалла. Венсан Ориоль çĕнĕ конституци çинчен, Блюм тата Депрю социалистсен партийĕн çĕнĕ уставĕ çинчен докладсем туса памалла. Съездăн пирвайхи ларăвĕ тăвăллăн пулса иртнĕ. Даниэль Мейер тата облаçсенчи социалистла федерацисен хăшпĕр руководителĕсем хăйсен сăмахĕсенче компарти çине тапаннă. Çакна пула ораторсене хытă протестленĕ, ораторсем темиçе минут хушши калаçма та пултарайман.

ПЕТЭН ПИРКИ ЙЫШĂННĂ СУД ПРИГОВОРĔ

ПАРИЖ, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: августăн 15-мĕшĕнче çĕрле Верховный суд Петэна вĕлермелле тесе приговор йышăннă, унăн прависене пурне те пĕтерсе лартмалла, пĕтĕм пурлăхне тытса илмелле тунă. Анчах Петэн ватă çын пулнине шута илсе, Верховнăй суд ăна вĕлермесен те юрать пулĕ тесе палăртнă.

МИХАЙЛОВИЧ БАНДИН ПУÇЛĂХĔСЕМ ХĂЙСЕНЕ КАÇАРМА ЫЙТНИНЕ ЙЫШĂНМАН

БЕЛГРАД, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Югославири Танюг агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 13-мĕшĕнче Югослави халăхĕн вăхăтлăх скупщинин президиумĕ Михайлович бандин çичĕ пуçлăхĕ вĕлермелли приговор йышăннă пирки хăйсене каçарма ыйтнине йышăнман.

МАРШАЛ Г. К. ЖУКОВ ТАТА АРМИ ГЕНЕРАЛĔ ЭЙЗЕНХАУЭР БЕРЛИНА ÇИТНĔ

БЕРЛИН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ленинградра пулнă хыççăн Совет Союзĕн Маршалĕ Г. К. Жуков тата арми генералĕ Дуайт Д. Эйзенхауэр августăн 15-мĕшĕнче 19 сехет те 45 минутра Берлин патĕнчи аэродром çине аннă, вĕсене унта Хĕрлĕ Çарăн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çарĕн генералĕсем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ. Хирĕç тухса кĕтсе илнĕ чухне Америка çарĕсем хисеплĕ хурал тăратнă, Совет Союзĕпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен гимнĕсене каланă.

ТРУМЭН В. В. КУЗНЕЦОВ ЮЛТАША ЙЫШĂННИ

ВАШИНГТОН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Совет профсоюзĕсен Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене кайнă делегацийĕн пуçлăхĕ В. В. Кузнецов юлташ производствăллă профсоюзсен конгресĕн председателĕпе Мэррейпе пĕрле Шурă Çурта Трумэн президент патне пынă.

АФТ РУКОВОДСТВИН ПОЛИТИКИНЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕНИ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли уоркер» хаçат çапла пĕлтерет: Америкăри ĕç федерацине (АФТ-а) кĕрекен чылай профсоюзсен представителĕсенчен АФТ-а пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен организацине кĕртессишĕн кампани ирттерме тунă Кливлендри комитет АФТ исполкомĕ патне тата исполкомăн кашни уйрăм членĕ патне телеграмма янă. Телеграммăра çав комитетăн делегацине йышăнма тата вăл паракан сĕнӳсене итлеме ыйтнă.

Телеграммăна комитет председателĕ Уорд тата комитет секретарĕ Вильсон алă пуснă. Унта çапла каланă:

«Июлĕн 22-мĕшĕнче пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен 40 представителĕ Кливлэндра канашлу туса ирттернĕ. Вĕсем Америкăри рабочисен юхăмĕ умĕнче тăракан хăрушлăх çинчен сӳтсе-явнă. Çав хăрушлăх, эсир пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен пĕрлĕхне тăвассине килĕшмен пирки, пуринчен ытла АФТ членĕсем умĕнче тăрать. Пĕтĕм тĕнчери рабочисем çавăн пек пĕрлĕх тума ыйтаççĕ. Сирĕн халăхи позици Пĕрлешнĕ Нацисен мирпе хăрушсăрлăха упрама тунă организацийĕн уставне хирĕç пырать. Кливлэндра пулса иртнĕ канашлу АФТ исполкомĕн ларăвне делегаци яма йышăнчĕ. Эпир пĕтĕм тĕнчери профорганизацисен руководствинче хамăра тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла тата пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен пĕрлĕхне туса хурас ĕçе хутшăнмалла пултăр тесе, çав делегаци хамăрăн позицине тепĕр хут пăхса тухма сĕнмелле. Исполком çак ĕç пирки паха пулнине туйса илсе, делегацие йышăнмалли кунпа сехете кăтартса парĕ тесе шутлатпăр эпир. Делегаци Чикаго хулине августăн 13-мĕшĕнче пырса çитет».

Чăваш АССР Прокуратуринче

Сĕнтĕр районĕнчи «Ударник» колхозра тырпул пухса кĕртмелли тата государствăна тырă памалли графика пăсаççĕ. Кĕрхи тырă вырма августăн 8-мĕшĕнче кăна тухнă. Ĕç дисциплини япăххине пула, уйхир бригадин кашни членĕ пуçне кунне 0,04 гектар çеç выраççĕ. Колхозра юсавлă, ĕçлеме пултаракан икĕ жнейка пур пулсан та, тырра çурлапа кăна выраççĕ. Колхозниксем машинăпа вырас тесен те, колхоз председателĕ жнейкăна хире илсе тухма ирĕк памасть, жнейка çинче ĕçлекен машиниста тырпул пухса кĕртессипе çыхăнман ытти ĕçе ярать.

Колхоз çак вăхăта çитсе те авăн çапма тата государствăна тырă пама тытăнман.

Колхоз председателĕ Л. С. Абросеев тырпул пухса кĕртес ĕçе ертсе пымасть, хăйĕн килĕнчи ĕçсене туса вăхăта ирттерет.

Тырпул пухса кĕртмелли тата государствăна тырă памалли графика пăснăшăн тата тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте машинăпа ĕçлессине хирĕç пулнăшăн «Ударник» колхоз председательне Абросеева суда панă.

Ответлă редактор
В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Канашри финанс техникумĕ I-мĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.
Техникум финанс органĕсенче бюджет учечĕпе ĕçлекен бухгалтерсене тата государство бюджечĕпе налогсем тĕлĕшпе ĕçлекен финансистсене вĕрентсе хатĕрлет.
Техникумра 3 çул вĕренмелле.
Техникума 14 çултан пуçласа 25 çула çитнисене, вăтам шкулта 7 çул вĕреннисемпе тан пĕлекеннисене илеççĕ.
Заявленисене сентябрĕн 20-мĕшĕччен йышăнаççĕ.
Заявленипе пĕрле çак документсене тăратмалла: а) ăçта миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство (свидетельствăна хăйне, копине мар), б) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство (каллех свидетельствăна хăйне), в) автобиографи, г) сывлăх çинчен калакан справка, д) çар тĕлĕшпе мĕнле шутланса тăнине кăтартакан справка (ăна çара кайма тивĕçлисен памалла), е) 3 сăн ӳкерчĕкĕ.
Техникума илмелли экзаменсем сентябрĕн 21-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ, вĕсем çак предметсемпе пулаççĕ: вырăс чĕлхипе тата литературипе (çыртараççĕ тата сăмахпа калаттараççĕ) математикăпа (çыртараççĕ тата сăмахпа калаттараççĕ) тата Конституципе (сăмахпа калаттараççĕ).
Отличниксене экзаменсăрах илеççĕ.
Вĕренекенсене уйăхне 80 тенкĕрен пуçласа 150 тенкĕ таран стипенди параççĕ тата 2-мĕш категорири рабочисен норми[illegible]семпе çăкăр тата ытти продуктсем параççĕ. Хваттер çуккисене общежитие хваттере вырнаçтараççĕ. Столовăй пур.
Техникум адресĕ: гор. Канаш, Комсомольская ул., 9.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

КТ 00211 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2, ф. 6. 59 42 п. п. Тираж 16.000